27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ФЕВРАЛЬ
24
ШАМАТКУН
36(6787) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Белоруссири 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне ЖУКОВА
Фронт штабĕн начальникне
Генерал-полковника МАЛИНИНА

БЕЛОРУССИРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, пĕр уйăх хушши хупăрласа тăрса вăйлăн çапăçнă хыççăн, тăшманăн çавăрса илнĕ группировкине пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăхнă та паян, февралĕн 23-мĕшĕнче, ПОЗНАНЬ хулине крепоçне—нимĕçсен Берлин енчи оборонин стратегиллĕ паха узелне—пĕтĕмĕш пех туртса илнĕ.

ПОЗНАНЬ хулинче çапăçнă чухне фронт çарĕсем нимĕçсен 23.000 салтакĕпе офицерне, вăл шутрах крепость комендантне МАТТЕРН генерал-майора тата унăн штабне, тытăлса илнĕ, çавăн пекех тата хĕçпăшалсемпе çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

ПОЗНАНЬ хулинче крепоçне туртса илессишĕн çапăçнă чухне çаксем чапа тухнă: ЧУЙКОВ генерал-полковникăн, ДУХАНОВ генерал-лейтенантăн, ВОЛКОВ генерал-лейтенантăн, БЕЛЯВСКИЙ генерал-майорăн, ШЕМЕНКОВ генерал-майорăн, артиллери генерал-майорĕн ХЕТАГУРОВАН, ГЛЕБОВ генерал-майорăн, БАКАНОВ генерал-майорăн, КОБЕРИДЗЕ генерал-майорăн, МОИСЕЕВСКИЙ генерал-майорăн, МАРЧЕНКО полковникăн çарĕсем; артиллери генерал-лейтенанчĕн ПОЖАРСКИН, артиллери генерал-майорĕн РОЖАНОВИЧАН, артиллери генерал-майорĕн ЛЕБЕДОВСКИН, артиллери генерал-майорĕн СЕРЕДИНАН, ФАНТАЛОВ полковникăн, ПАСЬКО полковникăн, ПРОЗОРОВ полковникăн, ВИНОГРАДОВ полковникăн, ЕГОШИН полковникăн, ЦАРЕВСКИЙ полковникăн, ПОТЕМКИН полковникăн, ВАЛЬЧЕНКО полковникăн, РУСАНОВ полковникăн, ЦАРЕВ полковникăн, ШЕВЧЕНКО полковникăн, КОЗУБ полковникăн, ПОЧИТАЛОВ полковникăн, МИХАЙЛОВСКИЙ подполковникăн, АНАШКИН подполковникăн, СКВОРЦОВ подполковникăн артиллерисĕнчĕсем; танковăй çарсен генерал-майорĕн ВАЙНРУБАН, ЕРЕМЕЕВ полковникăн, ОМЕЛЬЧЕНКО полковникăн, ЛОБАНОВ подполковникăн, ИВАНЮК подполковникăн, ЛУКША подполковникăн, ИВАНОВ майорăн, КИБАЛЬ майорăн, ГЕРЦЕР майорăн, ВЕЙСМАН майорăн танкисчĕсем; авиаци генерал-майорĕн КОМАРОВАН, ЯКОБСОН полковникăн, НОВИКОВ подполковникăн, ЛЫСЕНКО подполковникăн, ВОЛКОВ подполковникăн, ЛЕОНОВ подполковникăн, ВАСИЛЬЕВ подполковникăн, АБРОСКИН майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-майорĕн ТКАЧЕНКАН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн ВОРОНОВАН, КУЗНЕЦОВ подполковникăн, ПРУСС полковникăн, СУДИЛОВСКИЙ майорăн, РОЖДЕСТВЕНСКИЙ подполковникăн, МАХОВ майорăн, МАНИН капитанăн саперĕсем: ЧЕРКАСОВ полковникăн, ТУПАЧЕНКО полковникăн, ПОЛОСМАК майорăн, ОРЛОВСКИЙ майорăн связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве яланлăха палăртса хăварас тесе, ПОЗНАНЬ хулине крепоçне туртса илессишĕн çапăçнă чухне уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе часть «ПОЗНАНЬСКИ» тесе ят панă тата орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, февралĕн 23-мĕшĕнче, 22 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столицин МУСКАВ, никĕçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, Белоруссири 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ПОЗНАНЬ хулине крепоçне туртса илнĕскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ПОЗНАНЬ хулине ирĕке кăларассишĕн çапăçнă çăрте пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн Тăван ТАВАТАП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене — вилĕм!

Верховный Главнокомандующий
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи февралĕн 23-мĕшĕ. № 254

Çĕпĕрти машинăсем тăвакан гигант

1941 çулхи хĕлле Енисей шывĕн пуçи çыранĕ хĕрринче, Красноярск хули çывăхĕнче, машинăсем тăвакан пысăк завод тума пуçланă. Кунта инсери Бежицы хулинчен «Красный Профинтерн» заводăн оборудовнийĕпе материалĕсене тиенĕ тата рабочийĕсене лартнă эшелонсем çитнĕ. Строительствăра хĕрӳллĕ ĕç пуçланса кайнă. Хăвăрт ĕçлемелли майсемпе усă курса, темиçе уйăх хушшинче пушă вырăнтах ултă цехăн çурчĕсене туса лартнă. Çирĕм кун хушшинче 3.000 киловатт энерги паракан турбинăллă электростанци туса лартнă. Ку ĕнтĕ пĕчĕк завод пулса тăнă.

1942 çулхи май уйăхĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕ Красноярск хулинче машинăсем тăвакан «Красный Профинтерн» заводăн пĕрремĕш черетне туса пуçласси çинчен постановлени йышăннă. Вăл заводра хĕвăтлă паровозсем, металлурги кранĕсем тата промышленность валли ытти машинăсем тумалла пулнă. Строительсене йывăр задача лекнĕ. Анчах производствăн пысăк коллективĕн ĕç опычĕ пулнă, вăл çине тăрса тата йĕркеллĕ ĕçленĕ. Ĕçе Çĕпĕрти сивĕ хĕл нумай чăрмантарнă. Çавах та 45 градуслă сивĕсем строительство ĕçне чарса лартма пултараймăн. Строительсен коллективне инженерла-техникăлла шухăш пулăшнă.

Завода ниçта çук курман хăвăртлăхпа тунă. 9.000 тăваткăл метр çĕр йышăнса тăракан хуран цехне 50 кун хушшинче туса лартнă. Çав вăхăт хушшинче 30.000 кубометр çĕр чавса тăпра кăларнă, 2.5 миллион кирпĕч хывнă тата 10.000 кубометр йывăç купаланă.

«Красный Профинтерн» заводăн пĕрремĕш черетне туса çитернĕ. Правительство пана заданисĕр пуçне, 6 цех туса пĕтерсе ĕçе янă. Çĕршывăн хĕвелтухăç пайĕнче. Çĕпĕрте шултăра машиностроенин пысăк никĕсне туса хурса ĕçлеттерме пуçланă. Заводпа пĕр вăхăтрах рабочи поселок та туса хунă. Унта механикăпа машиностроени техникумĕ, ФЗО шкулĕ, клуб тата библиотека пур.

Строительсен коллективне завода туса пĕтернĕшĕн тата заводăн пĕрремĕш черетне ĕçе янăшăн тав туса, Сталин юлташ çапла çырнă:

«Чугун çул транспортĕпе пĕтĕм халăх хуçалăхĕшĕн питĕ паха пулса тăракăлла машиностроенин Çĕпĕрти пысăк никĕсне вăрçă вăхăтĕнче туса хурасшăн хăвăрăн хăвăр шеллемесĕр ĕçленине çĕршыв нихăçан та манас çук». (ТАСС).

Кашни район центрĕнче библиотека пулать

РСФСР Совнаркомĕ Брянск, Калуга, Великие Луки, Псков, Тюмень хулисенче тата ытти хуласенче те область библиотекисем тума йышăннă. Кунсăр пуçне, 288 районти библиотекăсем уçăлмалла. Кашни район центрĕнчех библиотека пулмалла, кашни библиотекăра 3.000 кĕнекеден кая мар пулмалла. Ялти халăх валли куçса çӳрекен 15.000 библиотека уçăлмалла.

Халĕ библиотекăсене государство шутлет. Уйрăм ведомствăсемпе организацисене хăйсен библиотекисене РСФСР Наркомпросе ирĕх памасăр хупма чарнă.

Кăçал районти çенĕ библиотекăсене çур миллионран кая мар кĕнеке ямалла. РСФСР Наркомпросне кĕнеке фончĕсене упрассине çирĕп контроль туса пыма хушнă. (ТАСС).

КАЙАК-КЕШЕК ĔРЧЕТЕС ЫЙТУПА ПУХНА ПĔТЕМ РОССИЙАРИ КАНАШЛУ

Кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ыйтупа РСФСР Сĕрĕç Халăх Комиссарийĕнче пухнă пĕтĕм Российăри канашлу, хăйĕн ĕçне пĕтернĕ.

Фашистла нимĕç захватчикĕсем кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçе калама çук пысăк сиен кĕнĕ, колхозсен фермисене тата ăратлă кайăк-кĕшĕке пĕтерсе тăкнă. Хальхи вăхăтра колхозсем тата уйрăм çынсем кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕçе çĕнĕрен пуçласа ярасçĕ. Ирĕке кăларнă районсене чĕпсем кăларма темиçе миллион çăмарта тата ăратлă кайăк-кĕшĕк темиçе çĕр пин пуç илме пынă. Кăçал инкубатор станцийĕсен хисепĕ чылай ӳсет, специалистсем вĕрентсе хатĕрлесçĕ. Кашни колхозăх кайăк-кĕшĕк ферми организацилеме шутлаççĕ.

Канашлу колхоз фермисенче зоотехника ĕçĕсене лайăхлатас, ăратлă чăх-чĕп ĕрчетес, шыв çинче ишсе çӳрекен кайăк-кĕшĕке ĕрчетес, вырăнти апатпа усă курас ыйтусене тата ытти сене те сӳтсе-явăл. (ТАСС).

ТАЛЛИН ХУЛИНЕ ЮСАНИ

Эстони ССР-ĕн Совнаркомĕ çумĕнчи Архитектура управленийĕ немĕçсем оккупацилеменĕ сиен курнă хуласене юсамалли проектсем хатĕрлет. Уйрăмăнах Таллин хулине юсас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Архитекторсем умне çакăн пек задача лартнă: хулан ĕмĕрсем хушшинче пулса тăнă архитектурине упраса хăвармалла çеç мар, ĕлĕк планланă чухне юлнă ситменлĕхсене те пĕтермелле. Уйрăм урамсене чылай аслăлатса тӳрлетмелле, тĕрлĕ магистральсене Мускаври Садовое кольцо пек çыхăнтарса хумалла. Хулан ывăçсем сахал пайĕсене çĕнĕрен садсем, скверсем, бульварсем тумалла.

Таллин хулинче çĕнĕ çуртсем лартмалла. Опера театрĕ, консерватори тата культура çурчĕсене тума йышăннă. Кунсăр пуçне, пурăнмалли 10 çурт тума йышăннă, кашни çуртрах 20—25 хваттер пулмалла. (ТАСС).

1944—45 ÇУЛСЕНЧЕ КЕРКУННЕПЕ ХЕЛЛЕХИ ВАХАТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА
(февралĕн 20-мĕшĕ тĕлне)

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа)		Мĕнле выран йышăнать	
	Турăрас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе	Турăрас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе
Куславкка	102.1	114.0	1	4
Чăрачăк	98.1	100.0	2	9
Шăхасан	93.4	112.5	3	6
Первомайски	90.4	94.2	4	14
Шупашкар	88.0	98.2	5	11
Советски	86.1	94.2	6	13
Красноармейски	80.6	80.2	7	19
Комсомольски	80.1	73.9	8	24
Муркаш	80.0	77.1	9	23
Чкаловски	80,0	65.8	10	27
Елчĕк	80.0	93.7	11	15
Сĕмĕрле	78.3	125.4	12	2
Пăрачкав	74.5	101.4	13	7
Сĕнтĕр	71.2	58.1	14	29
Çĕрпӳ	63.9	84.5	15	18
Канаш	65.8	79.6	16	20
Сĕнтĕрвăрри	65.1	114.0	17	5
Вăрнар	64.8	96.5	18	12
Тăвай	64.2	85.6	19	16
Вăрмар	60.5	60.3	20	28
Калинино	56.7	100.8	21	8
Хĕрле Чутай	51.3	99.0	22	10
Ишлей	50.4	124.4	23	3
Элĕк	50.3	72.1	24	25
Йĕпреç	50.0	78.3	25	21
Октябрьски	46.7	68.7	26	26
Шăмăршă	46.5	148.9	27	1
Етĕрне	45.9	77.8	28	22
Улатăр	41.6	57.2	29	30
Кувакино	29.3	84.8	30	17
* * *				
Кире вăрман хуçалăхĕ	100.3	102.4	1	4
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	98.1	128.4	2	2
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	94.5	153.1	3	1
Сĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	86.4	102.0	4	5
Алтышево вăрман. промхозĕ	81.8	69.2	5	18
Долгополянăри вăрман завочĕ	81.4	113.0	6	3
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	78.5	88.8	7	8
Йĕпреç участокĕ	76.0	77.9	8	7
Вăрнар вăрман. промхозĕ	67.0	89.4	9	10
Буинск вăрман. промхозĕ	67.0	95.8	10	6
Канаш вăрман. промхозĕ	63.9	54.7	11	19
Сĕмĕрле вăрман пункчĕ	63.4	72.6	12	12
Йĕпреç вăрман. промхозĕ	61.0	76,2	13	9
Кире вăрман пункчĕ	60,8	84.4	14	11
Хĕрлĕ Чутай вăрман пункчĕ	59,3	76,6	15	15
Атăл лош енчи вăрманпромхоз	52,8	73,3	16	16
Улатăр вăрман. промхозĕ	49,3	70,5	17	14
Шăмăршă вăрман. промхозĕ	39,1	70,4	18	17
Алтышевăри вăрман завочĕ	30,5	75,4	19	13

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене пани

1944 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн пынă социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн Вăрнар районне тата 1944 çулта тракторсемпе ĕçлемелли плана тултарассишĕн пынă социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн Вăрнар МТС-не ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене памалла туна.

Çак кунсенче Вăрманкассинчи «Самолет» колхозăн аслă клубне районри колхоз председательĕсем, бригадирсем, ялхуçалăх специалисчĕсем, трактористсемпе трактористкăсем тата партипе совет активĕ чаплă пухăва пухăнчĕç.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ пуху участникĕсене ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене пана май саламласа сăмах каларĕ. Вăл ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне Вăрнар районĕ колхозниксемпе председательне Осипов юлташа парать.

Осипов юлташ, Хĕрлĕ Ялава илсе, районти колхозниксемпе колхозницăсем, Хĕрлĕ Çăрăн фронтри историллĕ çĕнтерĕвĕсемпе хавхаланса, çуракине тимлĕн хатĕрленни çинчен каласа парать.

— Иртнĕ çул эпир ялхуçалăх çулне ăнăçлă вĕсленĕмĕр, вăйлă тырпул пухса илтĕмĕр. ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ пирĕн колхозниксен ĕçне пысăка хурса хакларĕç, куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав памалла турĕç. Çак пысăк награда вăйлă тырпулпа тата пысăк тутăçлă вылăх-чĕрлĕхпе çĕнтессишĕн большевикла кĕрешме хушать. Хĕрлĕ Ялава хамăр алăрах хăварассишĕн эпир кăçал та ыйăма пĕлмесĕр ĕçлĕпĕр,—тет Осипов юлташ.

ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илсе, Вăрнар МТС директорĕ Никонов юлташ та сăмах каларĕ.

— Иртнĕ çул пирĕн МТС,—тет Никонов юлташ,—тракторсемпе ĕçлемелли плана 132 процент, кĕрхи çĕртме тумалли плана 127 процент тултарчĕ. Кашни 15 лаша вăйлĕ тракторпа 501 гектар сухалана, кăçал вара 600 гектар сухалама обязательство илтĕпĕр. Макаров юлташ ертсе пыракан трактор бригади, сезонра 1300 гектар сухаласа, республикăра 1-мĕш вырăн йышăнчĕ. Кăçал пирĕн ытти бригадăсем те Макаров бригадине танлашма обязательство илчĕç. МТС-ра тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсасси ăнăçлă пырать. Çак ответлă ĕçе февраль уйăхĕнче вĕçлеме обязательство илтĕмĕр, ăна эпир чыслăн пурнăçлăпăр,—тет МТС директорĕ Никонов юлташ.

Пухура «Волга» колхоз председателĕ Иванов, Чкалов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Яковлев, «Самолет» колхоз председателĕ Петров, «Трактор» колхоз председателĕ Евдокимов, МТС-ăн 7-мĕш трактор бригадин бригадирĕ Алексеев юлташсем сăмах тухса каларĕç. Вĕсем пуху участникĕсене хăйсен ĕçĕнчи опытпа паллаштарчĕç тата çуракине мĕнле хатĕрленни çинчен каласа пачĕç.

Пуху участникĕсем районри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсем патне çуракине лайăхрах хатĕрленессишĕн, вылăх-чĕрлĕх ĕрчетессишĕн большевикла кĕрешме чĕнсе çыру çырчĕç.

Укерчĕк çинче: пирĕн земляк И. М. Макаров генерал-майор. Вăл Шупашкар районĕнчи Соляново ялĕнче çуралса ӳснĕ.

Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа Шупашкарта пулса иртнĕ чаплă лару

Шупашкарта февралĕн 22-мĕшĕнче Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 27 çул тултарнă ятпа партипе совет тата общество организацийĕсен чаплă ларăвĕ пулса иртрĕ.

Лару президиумĕнче—ВКП(б) Обкомĕн секретарĕсем Ахазовпа Андреев юлташсем, Чăваш АССР Совнаркомĕн Председателĕ Матвеев, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи Парти Контроль Комиссин Чăваш республикинчи Уполномоченнăйĕ Логин, ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Романова, Шупашкар хула совет исполкомĕн председателĕ Аникин тата ытти юлташсем.

Тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума аслă Сталина тата ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро составне суйласçĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ 27 çул тултарни çинчен гварди подполковникĕ Тютиков юлташ доклад туса пачĕ.

Ларăва пухăнăç çынсем пысăк çĕкленӳпе Верховный Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

Чаплă лару хыççăн Чăваш филармонийĕн артисчĕсем концерт пачĕç.

Йĕлтĕрлĕ чупу вĕçленнĕ

Енер республикăри всевобуч боецĕсен Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă ятпа организацине йĕлтĕрлĕ чупăвĕ вĕçленнĕ. Шупашкара мĕнпур районсенчен 142 боец килсе çитнĕ. Хĕрлĕ Площадьре командăсене ертсе пыракансем Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕне Андреева юлташа чупу мĕнле иртни çинчен тата халăха çар ĕçне вĕрентес ĕç хăйсен районĕсенче мĕнле пыни çинчен рапорт панă.

„Броневик" колхоза Хĕрлĕ Ялав панă

Колхозсенче вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пынă социализмлă ăмăртура 1944 çулта мала тухнăшăн Калинино районĕнчи «Броневик» колхоза Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тунă. Нумаях пулмасть çак ялава колхозниксемпе колхозницăсен аслă пухăвĕнче колхоза пачĕç. Колхозниксем клуб гуллиех пухăннă. Пысăк клубăн стенисем çинче колхозра стахановецсен портречĕсем çакăнса тăраççĕ. Кунтах вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен стахановецсем те пур. Вĕсен портречĕсене симĕс чăрăшсемпе илемлетнĕ.

Пуху председателĕ ВКП(б) Чăваш Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн заведующине Г. Гусев юлташа сăмах парать. Гусев юлташ, правительство хушнипе, колхозниксене вĕсен чаплă ĕçĕсемшĕн саламлать, унтан Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне «Броневик» колхоз председателĕне Федоров юлташа парать.

Федоров юлташ колхозра вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пыни çинчен тĕплĕн каласа парать. Вăрçă вăхăтĕнче колхоз вылăх ĕрчетес енĕпе сахал мар ĕç тунă. Çулсеренех çамрăк вылăхсене лайăх пăхса çитĕнтернĕ.

1944 çулта вылăх-чĕрлĕхе пăхас ĕçе нумай лайăхлатнă. Çавна пула «Броневик» колхоз пур вылăхсем енĕпе те плана иртерсе тултарнă.

Хĕрлĕ Ялава илнĕ хыççăн колхозниксем вылăх-чĕрлĕхе тата лайăхрах пăхма пулчĕç. Фермăри çамрăк пăрусемпе путексем валли йывăç пӳртсем туса панă. Вылăхсене тирне те рацион тăрăх тăрантарассине йĕркеленĕ. Çамрăк вылăхсем валли çулăллă апат хатĕрленĕ, сурăхсене тата ытти вылăхсене те типĕтнĕ врăмути, вĕлтĕрен çитереççĕ.

С. ШАДИН.

КАЛИНИНО («Чăваш Коммуни» корр.).

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 22-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНАЙ СВОДКА

Февралĕн 22-мĕшĕнче ЗЕМЛАНД сурă травĕнче, КЕНИГСБЕРГ хулинчен хĕвелтухăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман пехотине танкĕсен пысăк вăйĕсем тунă атакăсене сирсе пынă. Çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен часть çĕрĕр çыранĕн Кенигсберг бухтин çурçĕр çыранĕ чен хĕссе кăларнă. Çавăнпа пĕр вăхăтрах КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăç нерехре пирĕн çарсем тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкас щăн çапăçнă, ăна хупăрласа илнĕ унка хĕссе пырса, ЦИНТЕН хулине туртса илнĕ тата ЗАРГЕН, ПАЛЬТЕН, КИРШИНЕН, БОРМАННСХОФ, ПЛЯСВИХ ялĕсене йышăннă. КЕНИГСБЕРГ хулинчен хĕвеланăçнерехре виçĕ кун хушши, февралĕн 19-мĕшĕнчен пуçласа 21-мĕшне çитиччен çапăçса, пирĕн çарсем нимĕçсен 86 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине, 76 туппине, 160 пулеметне тата 300 автомашинине ытла пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн, вилнисене кăна шутласан та, 8.000 салтакпа офицер ытла пĕтнĕ.

ДАНЦИГ хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем наступлени туса пырса халăх пурăнакан ГОГОЛЕВО, КЕНИГСВАЛЬДЕ, БАРЛОШНО, ГЛУХА, ВАЛЬДДОРФ, КРАМПКЕН, ЛОНГ, ГУТТОВИТЦ, РИТТЕЛЬ ятлă пунктсене туртса илнĕ. Февралĕн 21-мĕшĕнче çав районра пирĕн çарсем нимĕçсен 500 салтакĕпе офицерне ытла тытăкана илнĕ тата çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: хăй тĕллĕн çӳрекен тупăсем—5, тупăсем—55, бронетранспортĕрсем — 24.

ПОЗНАНЬ хулинче пирĕн çарсем хулан ЦИТАДЕЛЬ ятлă пайĕнче ларакан тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

БРАНДЕНБУРГ провинцийĕнче, ГУБЕН хулинчен кăнтăртарахра, пирĕн çарсем НЕЙСЕ шывĕ çине тухнă, халăх пурăнакан 60 пункта ытла туртса илнĕ, çав шутра — ШЕНКЕНДОРФ, МАРКЕРСДОРФ, ШТРЕГА, ТЕЙПЛИТЦ, ТРИБЕЛЬ, ГРОСС ЗЭРХЕН, ТЕПФЕРШТАДТ, ДУБРАУ ятлă пысăк ялсем. ГУБЕН хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри вăрмансенче пирĕн çарсем тăшманăн хупăрласа илнĕ ушкăнне пĕтерсе тăкнă, çав ушкăнра 2.000 салтакпа офицер ытла пулнă. Çав ушкăна пĕтерсе тăкнă чухне боевой группăсен командирĕсене ХЕНШ полковникпа ЛЕНДЕЙНАР полковника тытăкана илнĕ.

БРЕСЛАУ районĕнче пирĕн çарсем тăшманăн çав хулара хупăрласа илнĕ группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, хула пăрлешсе ларнă БРЕСЛАУ-МАЗЕЛЬВИТЦ, КРИТЕРН, ГЮНЕРЕН, ЗИМОДОРФ ятлă пунктсене туртса илнĕ.

ДУНАЙ шывĕн çурçĕр хĕррипе, КОМАРНО хулинчен хĕвелтухăçнерехре, пирĕн çарсем тăшман пехотин танкĕсен пысăк вăйĕсем тунă атакăсене сирсе-сирсе янă. Февралĕн 21-мĕшĕнче çав районра нимĕçсен 40 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине пĕтерсе тăкнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче разведчиксем шыраса çӳренĕ тата тĕллĕн-тĕллĕн çапăçнă.

Февралĕн 21-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 198 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшпи çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 80 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ТĂШМАНАН КЕНИГСБЕРГ ХУЛИПЕ БРАТИСЛАВА ХУЛИНЧИ ВАРÇА ОБЪЕКЧĔСЕНЕ ЙЫШЛАН ВĔÇСЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Февралĕн 22-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕнле пирĕн йывăр бомбардировщиксем тăшманăн Кенигсберг хулинчи промышленноçпа вăрçă объекчĕсене йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула, 40 çĕлте ытла пушарсем тухнă, пушарсем вăхăтĕнче питĕ вăйлă взрывсем пулнă. Машинăсем тавакан заводпа газ завочĕн территорийĕнче те пушарсем тухнине асăрханă.

Çав каçах пирĕн авиаци тăшманăн Чехословакири Братислава хулинчи промышленноçпа вăрçă объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем пăрахнине пула, пушарсем тухнă, пушарсем вăхăтĕнче темиçе вăйлă взрыв пулнă.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кăнтăр-хĕвеланăç нерехре пирĕн çарсем тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Цинтен хули районĕнче питĕ вăйлă çапăçусем пынă. Немĕçсем çав хуларан хăйсен, оборонин питĕ вăйлă тĕреклетнĕ пункчĕ туса хунă. Вĕсем тимĕрпе бетонран, дотсем тунă, танксене чармалли тарăн канавсем чавнă. Цинтен таврашĕнчи çӳллĕ вырăнсенче артиллерипе минометсен батарейисем 80 батарея ытла вырнаçтарса лартнă. Совет чăсĕсем, çурçĕр енчен иртсе кайса, Шăрадик шывĕ урлă каçнă та хуларан хĕвеланăçнелле каякан пур çулсене те тата пăрахнă. Пирĕн ытти чăсем Цинтен хулине кăнтăр-хĕвелтухăç енчен вăркăнса кĕнĕ. Урамсенче вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Немĕçсем темиçе хут та контратака тунă. Анчах та пирĕн подразделенисем пыра-пыра çапăнипе каялла чакнă. Паян пирĕн çарсем тăшман гарнизонне аркатса тăкнă та хулана немĕçсенчен тасатнă. Цинтен хулишĕн çапăçнă чухне тăшманăн 4.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 10 бронетранспортер, 60 тупа пĕтерсе тăкнă. Немĕçсенчен 40 тупа, 108 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. 520 немĕçе тыткăна илнĕ.

* * *

Данциг хулинчен кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă. Пысăк вăрмансем, йышлă кӳлĕсемпе юханшывсем совет чăсĕсене çапăçма кансĕрлеççĕ. Хӳтĕлеме меллĕ вырăнпа усă курса, немĕçсем халăх пурăнакан пунктсене тĕреклетнĕ, çулсем хĕресленнĕ вырăнсенче хирĕç тăмалли дотсемпе дзотсем туса лартнă. Пĕр соединени чăсĕсем паян пĕр ялшăн тата Лонг чугун çул станцийĕшĕн вăйлă çапăçнă, çав пунктсем икĕ чугун çул пĕр-пĕрин урлă каçса кайнă тĕлте лараççĕ. Пирĕн боецсем тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкнă та Лонг станцине штурмласа тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 салтакĕпе офицерĕн вилли выртса юлнă. Немĕçсен 9 танкне тата 2 бронетранспортерне персе çĕмĕрнĕ. Тепĕр участокра пирĕн çарсем, çапăçса пырса, 10 километр малалла кайнă та немĕçсене вăйлă тĕреклетнĕ темиçе ялтан хăваласа кăларнă.

* * *

Познань хулинче пирĕн çарсем Цитадельре ларакан тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Пирĕн штурмлакăн отрядсем Цитаделе кăнтăр енчен хупăрласа тăракан çĕр-валне немĕçсенчен тасатнă та пусмасемпе тата штурмламалли пĕчĕк кĕперсемпе усă курса, канав урлă каçса кайнă. Унтан пирĕн боецсем совет артиллерийĕ крепость стенине персе шăтарнă вырăна вăркăнса кĕрсе кайнă та пĕр çурта туртса илнĕ. Немĕçсен 360 салтакĕпе 13 офицерне тыткăна илнĕ.

* * *

Бранденбург провинцийĕнче, Губен хулинчен кăнтăртарахра, пирĕн çарсем çапăçса малалла кусса пынă, анлă фронтпа Нейсе шывĕ çине тухнă. Губен хулинчен виçĕ километр кăнтăртарахра ларакан Шенкендорф ялне туртса илнĕ. Немĕçсене çавăн пекех тата Форст хулинчен 6 километр çурçĕртерехре ларакан Штерг ялĕнчен хăваласа кăларнă. Пĕр çăн подразделенийĕсем тăшман пехотин батальонне шыв хĕррине хĕстерсе лартнă. Гитлеровецсен пысăк пайне вĕлерсе пĕтернĕ, ытисене тыткăна илнĕ. Пĕр кун хушшинче тĕрлĕ участокĕсенче немĕçсен 38 танкĕпе хăй тĕллĕн çӳрекен туппине персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Трофейсем нумай тытса илнĕ.

СУРАКИНЕ БОЛЬШЕВИКЛА ХАТĔРЛЕНЕР!

Юсав ĕçне мартăн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлессишĕн

КУСЛАВККА, февралĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче МТС коллективĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Пухура МТС директорĕ Лаврентьев юлташ союзлă виçĕ державa руководителĕсен Крымри конференцийĕн итогĕсем çинчен доклад туса пачĕ. Çак савăнăçлă хыпара трактористсемпе трактористкăсем пысăк хаваслăхпа итлерĕç, çĕнтерӳ туса пыракан Хĕрлĕ Çара пулăшассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме пулчĕç.

Антонов тата Саперов ертсе пыракан трактор бригадисем хăйсен тракторĕсене юсаса пĕтернĕ. Мясников юлташ бригади те хăйĕн тракторĕсене лайăх тăхлăхпа юсаса пĕтернĕ. Скворцов юлташ ертсе пыракан бригада тракторсем юсас ĕçе паянпа пĕтерет.

МТС коллективĕ тракторсене Хĕрлĕ Çар 27 çул тултарнă уяв тĕлне, ялхуçалăх машинисене мартăн 1-мĕшĕ тĕлне юсаса пĕтерме обязательство илнĕ. Çак обязательствăна пурнăçлассишĕн халĕ кашни тракторист тата трактористка ăмăртса ĕçлеççĕ.

М. О.

ТРАКТОРСЕНЕ МĔНЛЕ ЮСАНИНЕ ТĔРĔСЛЕÇÇĔ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, февралĕн 23-мĕшĕ. (Телефонпа). Халĕ кашни МТС-рах тракторсем юсас ĕç хĕрӳллĕ пырать. Çак ытла та ответлă ĕçе вăхăтра тата лайăх тăвассишĕн Комсомольски МТС Чкаловски МТС-па ăмăртса ĕçлет. Ăмăрту условийĕсене мĕнле пурнăçланине МТС представителĕсем вăхăтран-вăхăта тĕрĕслесех тăраççĕ. Чкаловски МТС представителĕсем (вĕсене старши механик Северов юлташ ертсе пырать) çак кунсенче Комсомольски МТС-ра пулчĕç, тракторсене тата вĕсен-чен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсас ĕç мĕнле пынине тĕрĕслерĕç.

Комсомольски МТС паянхи кун тĕлне 18 трактор юсанă тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене пурне те юсаса пĕтернĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен 8-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Прокопьев юлташ) тата Асейнов ертсе пыракан 1-мĕш трактор бригади хăйсен тракторĕсене тата ытти машинăсене те юсаса пĕтернĕ. МТС-ăн юсамалли тата 6 трактор юлать. Союзлă виçĕ держава руководителĕсен Крымра пулса иртнĕ конференцийĕн итогĕсем çинчен сӳтсе-явнă пухура трактористсемпе трактористкăсем тракторсене мартăн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса пĕтерме обязательство илнĕ. МТС коллективĕ халĕ çак обязательствăна пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлет.

Хăйсен тракторĕсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсаса пĕтернĕ трактористсем колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ. Паянхи кун тĕлне трактористсем Пушкин ячĕпе тăракан колхоза 13 плуг, 2 сеялка юсаса панă. Халĕ «Кзыл Сабанча» тата Ленин ячĕпе тăракан колхозсен плугĕсемпе машинисене юсаççĕ.

Тракторсене юсанине тĕрĕслеме чухне Чкаловски МТС-ăн старши механикĕ Северов юлташ хăшпĕр тракторсен кăлтăкĕсене тупнă. Тĕрĕсленин итогĕсене ВКП(б) Комсомольски райкомĕн ларăвĕнче сӳтсе-явнă, палăртнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерме хушса хăварнă.

Комсомольски МТС представителĕсем Чкаловски МТС-ра тракторсемпе вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене мĕнле юсанине тĕрĕслеме çак кунсенчех Чкаловскине тухса каяççĕ.

Н. КОНДАКОВ.

„Труженик" колхоз çуракине лайăх хатĕрленет

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Чадукасси ял Советĕнчи «Труженик» колхоз çуракине лайăх хатĕрленет. Пур тĕрлĕ вăрлăхсене те сортласа уйрăм амбарсене хунă. Вăрлăхсем кондицине лараççĕ, вĕсен шăтăслăхĕ 95—96 процентран кая мар.

Çĕре çемçетни тырăул тухăçлăхне хăпартас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăнине кунта лайăх ăнланса илнĕ. Хире 1950 лав тислĕк кăларнă, 44 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ, 46 центнер кĕл пухнă.

Колхозăн кăçалхи çуракинче ĕçлеме лашасем сахалтарах. Çавна шута илсе, вĕсем 4 вăкăра кӳлсе ĕçлеме вĕрентнĕ. Халĕ вăкăрсемпе тислĕк тата выльăх апачĕсем турттарнă çĕрте усă кураççĕ.

Колхоз ялхуçалăх машинисене тата транспорт инвентарĕсене юсаса хатĕрлес тĕлĕшпе те аван ĕçлет. Плугсене, сӳресене тата ытти ялхуçалăх машинисене юсаса лартнă, транспорт инвентарĕсем юсавлă, кашни кӳлме юрăхлă лаша вăлăнех ут таврашĕсем çитеççĕ.

А. ВАСИЛЬЕВА.

Тухăçлă кок-сагыз туса илме тăрăшаççĕ

ÇĔРПУ. Тĕнĕр ял Советĕнчи «Кульмет» колхоз иртнĕ кĕркунне 6 гектар çине кок-сагыз акнă. Кăçал кок-сагыз вырăнĕ çине пĕтĕмпех юр тытса хăварнă тата унта 40 тонна тислĕк кăларнă.

Кок-сагыз туса илмелли агротехникăна вĕренме кружок организациленĕ. Халĕ кружокра 6 каласу пулса иртнĕ. Кружока агроном Сигарева юлташ ертсе пырать. Унта 23 çын çӳреççĕ.

А. ИВАНОВ.

Районсенчи парторганизацисен конференцийĕсем

КУСЛАВККА, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Февралĕн 18—19-мĕшĕсенче районри парторганизацин конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци ВКП(б) райком секретарĕн Крючков юлташăн тата ревизи комисси председателĕн Соловьев юлташăн отчетлă докладĕсене сӳтсе-явăрлă. райкомпа ревизи комиссин çĕнĕ составне суйларĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Крючков юлташ районри парторганизацин 1942 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа ку тарăнчехи ĕçĕсем çинчен тĕплĕн каласа панĕ.

Районри нумай предприятисем хăйсен фронтпа çĕршыв умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Котов юлташ çулла пĕрчĕллĕ тырăсем вăтам шутла гектартан 5,72 центнер илнĕ пулсан, иртнĕ çулта 12,4 центнер илнĕ. Тырăул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе «Динамо» колхоз малти ретре пырать.

Районри колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçа кĕртнĕ, Хĕрлĕ Çар фондне тырă нумай панă.

Колхозсене иртнĕ çулта МТС пысăк пулăшу панă. Вăл тракторсемпе ĕçлемелли плана 122,5 процент тултарнă, ĕç пахалăхне чылай лайăхлатнă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те район чылай пысăк ӳсĕмсем тунă.

Партиллĕ-политикăллă ĕçе вăйлатса пынине пула, парторганизацине ĕççыннисем хушшинчи сыхăну çирĕпленсе пырать. Районри парторганизаци отчетлă тапхăрта парти членне 211 çынна тата 397 çынна кандидата илнĕ. Çĕнĕрен 5 çĕрте пуçламăш парторганизацисем, 2 çĕрте кандидатсен групписем организациленĕ.

Çавăнпа пĕрлех конференци районри парторганизаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕ. Парторганизаци пур предприятисене те лайăх ĕçлекен тăваймăн. Апат-çимĕç комбиначĕ, механизацилене армби, Киров ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр артельсем начар ĕçлеççĕ.

Ялхуçалăхĕнче пусуçаврăнăшне пăсни пулнă. Районри 21 колхозра пĕрпулсене акмалли черете пăхăнмаççĕ. Лашасем ĕртетесси çителĕксĕр пырать,

Политикăллă воспитани ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе те нумай ĕçлемелле-ха.

Пленире пурĕ 18 çын тухса каласрĕç.

Конференци 25 çынран райком пленумне суйларĕ. Пленумăн организацияллĕ ларăвĕ ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Г. М. Крючков, иккĕмĕш секретарĕ пулма В. В. Чебухов, виççĕмĕш секретарĕ пулма В. О. Осипов юлташсене суйларĕ.

Конференцире ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ Ахазов юлташ пулчĕ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

* * *

ПЕПРЕÇ, февралĕн 22-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри парторганизацин çак кунсенче пулса иртнĕ конференцийĕ ВКП(б) райком секретарĕн Сидоров юлташăн докладне сӳтсе-явăрĕ тата райкомăн çĕнĕ составне суйларĕ.

Отчетлă тапхăрта районри парторганизаци ялхуçалăх ĕçĕсене нăхăтра пурнăçласа пырас, промышленность предприятийĕсен ĕçне çĕклес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçленĕ. Иртнĕ çулта районри колхозсем нумайĕшĕ тухăçлă тырпул туса илчĕç, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарчĕç.

Колхозсене МТС лайăх пулăшать. Вăл хăйĕн çулталăкри планне 142 процент пурнăçланă.

Доклад тăрăх пренире 14 çын тухса каларĕç. Вĕсем, парторганизаци ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, вĕсене сывăх вăхăтрах пĕтерме сĕнӳсем панă;. Район выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе юлса пырать. Сăмахран, иртнĕ çулта лашасем ĕртетмелли плана 66,5 процент çеç тултарнă. Парторганизацин тивĕçĕ — выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе татăклăнах лайăхлатасси пулать.

Икĕ çул хушшинче парти ретне пурĕ 271 çын илнĕ. Парти ретне илес тĕлĕшпе «Молния» колхозри, вăрман хуçалăхĕнчи парторганизацисем начар ĕçленĕ.

Конференци райком пленумне суйларĕ. Пленумăн организацияллĕ ларăвĕ ВКП(б) райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма П. С. Сидоров, иккĕмĕш секретарĕ пулма А. Гиляровский, виççĕмĕш секретарĕ пулма Ф. З. Захаров юлташсене суйларĕ.

П. КУРАКОВ.

Комсомолăн районри конференцийĕ

КӲКЕÇ, февралĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Кунта февралĕн 17—18-мĕшĕсенче комсомолăн районри VII-мĕш конференцийĕ пулса иртрĕ. Конференци ВЛКСМ райкомĕ юлашки 4 çул хушшинче мĕнле ĕçлени çинчен ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Т. Андреева юлташ тунă отчетлă доклада итлесе сӳтсе-явăрĕ. Доклад тăрăх пренире 12 çын тухса каласрĕç.

Вăрçă çулĕсенче комсомол организацисем фронта пулăшас тĕлĕшпе начар мар ĕçленĕ. Вăрçă техники тума укçа пухнă, Хĕрлĕ Çар фондне апат-çимĕç, ăшă тумтирсем пухса панă.

Анчах юлашки вăхăтра комсомолăн районри организацийĕ хăйĕн ĕçне сӳрĕклетмĕ. ВЛКСМ райкомĕ пуçламăш организацисене кирлĕ пек ертсе пыман, ĕçре пулăшман, учетпа отчет ĕçне начах начар туса пынă.

Комсомолăн пуçламăш организацисене çирĕплетес, колхоз çамрăкĕсене комсомол ретне явăстарас тĕлĕшпе ВЛКСМ райкомĕ те, комсомолăн пуçламăш организацисем те начар ĕçленĕ. Çавна пула, юлашки çулсенче комсомолецсен шучĕ чакса пынă, комсомолецсем хушшинче дисциплина япăх. Нумай организацисенче пухусем ирттермеççĕ, член укçипе вăхăтра тӳлемеççĕ. Нумай комсомолецсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе пиллĕн те тумаççĕ. Районра ялти çамрăксен кăсхи шкулĕсенче вĕренес тенекисем сахал мар. Анчах ВЛКСМ райкомĕ колхоз çамрăкĕсен кăсхи шкулĕсене усăс тĕлĕшпе нимĕн те туман.

Çак çитменлĕхсем пĕтĕмпех ВЛКСМ райкомĕ пуçламăш организацисене кирлĕ пек ертсе пыманран, колхоз çамрăкĕсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе начар туса пынинчен килнĕ.

Конференци хăйĕн ĕçне 6 сехет кая юлса пуçларĕ, иккĕмĕш кунĕнче те вăхăтра пуçламарĕ. 16 делегат конференцине пачах пыман, 6 делегат комсомол билечĕсемсĕр пынă.

Конференци ВЛКСМ райкомĕн пленумне 29 çынран суйларĕ.

Пленум ВЛКСМ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ пулма Т. Яковлева тата иккĕмĕш секретарĕ пулса ĕçлеме Т. Андреева юлташсене суйларĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Фронтовиксен ачисене пулăшмалли воскресник

Хĕрлĕ Çар кунне уявлама хатĕрленнĕ май фронтовиксен ачисене пулăшас ĕç тумай лайăхланчĕ. Ку енĕпе комсомол организацисем тимлĕн ĕçлеççĕ. Февралĕн 11-мĕшĕнче пирĕн республикăра комсомолецсемпе çамрăксем фронтовиксен ачисене пулăшма воскресник туса ирттерчĕç. Çамрăксем 42351 тенкĕ укçа, çăнăх 1446 килограмм, супăнь 55 килограмм, аш-какай 37 килограмм, çĕрулми 15.993 килограмм, пыл 10 килограмм, çăм 232 килограмм, чăлхасем-пе алшăсем 38 мăшăр, 82 çĕлĕк, 15 тир, тĕрлĕ чашăк-тирĕксем 20 штука, 800 карандаш, 400 тетрадь пухса панă.

Воскресник уйрăмăнах Красноармейски, Чурачăк, Октябрьски тата Сĕнтĕр районĕсенче лайăх иртрĕ. Вăл районсенчи комсомолецсемпе çамрăксем фронтовиксен ачисене пулăшас тĕлĕшпе паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Çав вăхăтрах ВЛКСМ Ишлей, Шăхасан, Çĕрпӳ райкомĕсем воскресник ирттерес тĕлĕшпе нимĕнех те туман.

Конференци решенийĕсем çине ответлесе

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ, февралĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче çу заводĕнчи рабочисемпе служащисем союзлă виçĕ державăн—Совет Союзĕн, Великобритани тата Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен—руководителĕсен конференцийĕн решенийĕсене сӳтсе-явăрĕç.

Конференци решенийĕсем тата Хĕрлĕ Çăран фронтсенчи çĕнтерĕвĕсем çине ответлесе, рабочисемпе служащисем Хĕрлĕ Çар валли боевой самолетсем тума 3.845 тенкĕ укçа хывăç. П. ТИХОНОВ.

ИКЕ ВЫЛЯВ

Февралĕн 15-мĕшĕнче Мускавра, Союзсен Çурчĕн Октябрьски залĕнче икĕ выляв пулса иртнĕ: Виссĕмĕш Пятилетка Заемĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн) 25-мĕш вылявĕ тата Виссĕмĕш Пятилетка Заемĕн (иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн) 21-мĕш выляв.

Виссĕмĕш Пятилетка Заемĕн (пĕрремĕш çулхи кăларăмĕн) вылявĕнче 89.325.400 тенкĕлĕх 457.500 выигрыш выляннă.

Виссĕмĕш Пятилетка Заемĕн (иккĕмĕш çулхи кăларăмĕн) вылявĕнче 89.325.400 тенкĕлĕх 540.200 выигрыш выляннă.

ПРОФСОЮЗСЕН ПĔТЕМ СОЮЗРИ ХĔЛЛЕХИ СПАРТАКИАДИ УÇАЛНА

Ленинградра профсоюзсен Пĕтĕм Союзри хĕллехи виссĕмĕш спартакиади уçалнă. Отечественнăй вăрçă вăхатенче Ленин хулинчи юрлă паркsемпе стадионсенче хĕллехи пысăк ăмăртусем пирвайхи хут пулса иртеççĕ. Совет Союзĕн пур кĕтессисенчен те пин ытла чи лайăх спортсменсем пырса ситнĕ. Вĕсем ирĕклĕ спорт обществисен представителĕсем пулса тăраççĕ. (ТАСС)

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе каларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Германире, Рейнпа Маас шывĕсем хушшинче, Мойланд районĕнче хаяр çапăçусем пынă. Союзниксен çарĕсем кунта Калькар еннелле пăртак малалла кусна. Союзниксен çарĕсем çавăн пекех Гох хулине вăркăнса кĕнĕ. Тăшман вăйлăн хирĕç тăрса çапăçнă пулин те, хулана пĕтĕмпех тенĕ пек тăшмантан тасатнă.

Эхтернахран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре (Люксембургра) халăх пуранакан икĕ пункта тăшмантан тасатнă. Боллендорфран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман тупа темиçе контратакăна сире-сире пăрахнă. Эхтернахран хĕвелтухăçнерехре союзниксем çарĕсем Минден хулинчен пĕр мильăра тăраççĕ. Ремихран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Мюнцинген таврашĕнче, союзниксем пĕр мильăна çити малалла кусна.

Форбах патĕнче союзниксен çăçĕсем Этинген тата Этилинген хулисене йышăннă. Тăшмана кунта пысăк сухатусем кӳнĕ. Сааргемюндран çурçĕртерехре тăшмана нимĕçсен Ауэрсмахер хулинчен сирпетсе кăларнă та союзниксен çарĕсем кунта Саар шывĕ урлă каçна. Унтан утрав патнерех союзниксен çăçĕсем Фрауэнберг тата Фольперсфейлер хулисене йышăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС) Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшăллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе каларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире, Пистойăна Болонья хушшинчи шоссе çулĕнчен хĕвеланăçнерехри сăртлă вырăнсенче, Америкăн 5-мĕш армийĕн çарĕсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. 5-мĕшпе 8-мĕш армисен ытти участокĕсенче патрульсем çапăçнă.

Союзниксен стратегиллĕ авиацийĕ шутне кĕрекен ывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, 7-мĕш кун ĕнтĕ пĕр чăнăмасăр Вена районĕнчи сулийĕсене пыра-пыра тапăнассĕ. Пыăр бомбардировщиксен урăх соединенийĕсем Сурçĕр Италири порт сооруженийĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе каларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Рейнпа Маас хушшинчи участокра, Калькар хулинчен хĕвеланăçнерехри районра, союзниксен çарĕсем тăшманăн пехотипе танкĕсем тунă контратакăсене сире-сире пăрахнă. Наступленипе пуçласа янăранпа сурçĕрти сектортa 10.000 çынна яхăн тыткăна илнĕ.

Союзниксен çарĕсем Люксембург, Бельги тата Германи чиккисем пĕрлешнĕ вырăнтан, 4 мильăна яхăн хĕвелтухăçнерехре ларакан Виншейд хулине пырса кĕнĕ. Ку районтан кăнтăр-хĕвеланăçнерехре союзниксем çарĕсем Данекран çурçĕртерехре Дасбург-Лютцкампен хушшинчи çул çине 2 миля тăршшĕ участокра тухнă. Виандекран çурçĕртерехре (Люксембургра) союзниксем Бивельс хулине пырса кĕнĕ. Çак хуларан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксем Оберсгегена тăшмантан тасатнă. Союзниксен çарĕсем çавăн пекех Реймобласĕнчи Стоккем хулине йышăннă. Çав районтан 5 мильăна яхăн хĕвелтухăçнерехре союзниксен çăçĕсем. Ремихран çурçĕртерехре Мозель шывĕ урлă кĕтмен çĕртен каçнă та. Рейн облаçĕнчи Винхеринген хулине йышăннă. Союзниксен çарĕсем çавăн пекех Вейтен хулине йышăннă тата Фрейденберга тăшмантан тасатаççĕ.

Саарбрюкенран кăнтăртарахра союзниксен çăçĕсем темиçе хула тытса илнĕ. Вĕсем хушшинче Гроссбиттесдорф хули. Çак районран хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Саар шывĕн Германи сыранĕ çинчи Клейнбиттерсдорф хулине тăшманган тасатнă.

Çав кунах йывăр бомбардировщиксен соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Нюрнбергри чугун çул центрне тапăннă. Февралĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле йывăр бомбардировщиксен питех те пысăк соединенийĕсем Дортмунд хулине тапăннă. Çăмăл бомбардировщиксем Берлина тата Рур облаçĕнче Рурран хĕвеланăçнерехри шоссене чугун çул объекчĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшăллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе каларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире, Пистойăна Болонья хушшинчи шоссе çулĕнчен хĕвеланăçнерехре, американецсен 5-мĕш армийĕн часĕсем Бельведерпе Гордолеско ятлă çӳллĕ вырăнсенче паха позицисем йышăннă. Ку районта çапăçусем пыраççĕ. 8-мĕш армин патрульсем активлăн çапăçаççĕ.

Американецсен 15-мĕш авиакорпусĕн ывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, февралĕн 20-мĕшĕнче Вена сывăхĕнчи нефть ĩохтаракан завода тата Триест, Фиуме тата Пола порчĕсен районне тапăннă.

БЕРХТЕСГАДЕН ÇИНЕ БОМБАСЕМ ПĂРАХНИ

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи штабĕн пĕлтерӳне парать. Вăл пĕлтерӳре каланă тăрăх, февралĕн 20-мĕшĕнче Гитлерăн çуллахи резиденцийĕ пулса тăракан Берхтесгаден çине вăрçă пуçланнăранпа пĕрремĕш хут бомбăсем пăрахнă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ пичетлесе каларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, хаяррăн çапăçнă хыççăн Югослави часĕсем Зворник хулине йышăннă. Çав районта вăйлăлатнă нимĕç дивизине пĕтĕмпе тенĕ пекех арканса тăкнă. Дивизин пĕчĕк юлашкийĕсем кăна хупăрласа илнĕ унăкăран тухма пултарнă. Малтан тунă сухатусене шута илмесен те, дивизире 8.500 нимĕç салтакĕнe офицерĕпе пĕтнĕ. Нумай трофейсем тытса илнĕ.

Травник секторĕнче Югослави часĕсем, тăшманăн хаяр атакисене сире-сире пăрахса, контрнаступлени тунă та Травник хулине тата халăх пурăнакан ытти пунктсене ирĕке кăларнă. Тăшманăн Кондидра хупăрласа илнĕ гарнизонне пĕтерсе тăкас тĕлĕшпе çапăçнă.

„Германин хăрушă районĕсенче" çынсем хăраса ӳкнĕ

ГИТЛЕРЛА ВЛАÇСЕМ ХИРТИ ÇАР СУЧĔСЕМ ТУМА ПРИКАЗ ПАНА

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла агентство—Германин информаци бюровĕ çапла пĕлтернĕ: Германин юстици министрĕ «Германин хăрушă районĕсенче» хирти çар суччĕсем тăвасси çинчен приказ кăларнă.

Çавăн пек судсем тума кирлине приказра çапла ăнлантарса панă: «Кĕрешĕвĕн йывăрлăхĕ кашни немĕçе калама çук хастарлă та парăнса ĕçлеме хушать», анчах «хăранине е кашни хăйĕн çеç тăрăшнипе хăйсен ĕçĕнчен пăранма хăтланакансем пур», тенĕ.

«Германин çапăçас шухăш-кăмăлне» Геббельс пропаганди çав тери мухтатчĕ. Çав шухăш-кăмăл халăхи вăхăтра питĕ хаваласа кайнă. Халь тăвакан çар суччĕсене ĕçе ахаль суда памалла мар пулсăн, вĕлермелле приговор çеç йышăнма хушнă.

Ятарласа хирти çар суччĕсем тума хушакан приказ çинчен «Моргон-Тидингена хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ çапла çырать: «Геббельс пропагандăна хирти судпа улăштарать, «виççĕмĕш империна» хăватне хавшатма хăтланакан çынсене пĕтерсе тăваççĕ», тет. Çав хаçатах Швейцарирен пĕлтернине пичетлет. Унта çапла каланă: «Хирти çар суччĕсене Германин хĕвелтухăçне хĕвеланăç фронтĕсенче çар часĕсем восстани тума хăтланнă пирки тунă», тенĕ.

МУССОЛИНИ «ПОСОЛĔ» БЕРЛИНРИ ЛАРУ-ТĂРУ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Швейцарин «Суисс» хаçатĕн пĕлтерĕвне парать. Вăл пĕлтерӳре çапла каланă: Итали партизанĕсем Муссолини Берлинри «посолĕ» Филиппо Анфузо ятлă секретлă пĕлтерĕве тытса илнĕ. Вăл пĕлтерӳ Берлинри лару-тăрăва уçăн кăтартса парать.

Берлинри лару-тăру питĕ йывăр,—тенĕ пĕлтерӳре,—анчах та нимĕçсем, çав тери вăйăсăрланса çитнĕ пирки, восстани тума пултараймĕç». Финансри çав тери вăйлă кризис нимĕçсен хаклă хучĕсене йӳнетсе пăрахнă, укçа ним чухлĕ те тăмасть. Пит нумай салтаксем нимĕç çарĕнчен тараççĕ, çав сучĕсем кашни кунах çĕршер дезертира суд тăваççĕ.

Юлашкинчен Анфузо нимĕçсен вăйĕ кашни секретренех чакса пыни çинчен пĕлтерет

Греции лару-тăру

ГРЕЦИРИ КВИСЛИНГСЕНЕ СУД УМНЕ ТАРАТАС УМЕН

ЛОНДОН, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Афины хулинчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: немĕç оккупанчĕсемпе пĕрле ĕçленĕ коллаборационистсен ĕçне ыран суд пăхма тытăнмалла, çакă Греци умне ывăр шăйту лартма пултарать. Пĕр енчен, суд тăвассине палăр мар вăхăта хăварма çук, мĕншĕн тесен Греции халăх оккупацилене ытти çĕршывсенчи пекех, сутăнчăксене тата хăйсен çĕршывĕнчи пăрăнчăксене пулнă вăхăтра çăмăл çул çине тăнă сынсене наказани пама ыйтать. Тепĕр енчен, сырать корреспондент, халăх вăхăтра суд туни, паллах, сынсене политика тĕлĕшпĕнчен хумхатма пултарать, мĕншĕн тесен Греции сутăнчăксене суд тунă вăхăтра нумай ыйтусене тепĕр хут пăхса тухмалла пулать, çĕршыври политикăллă деятельсене нумайĕшне свидетель тумалла пулать. Çакна пула политикăллă деятельсем пирки «вĕсене шанса тăрассине çирĕплетмен» заявленисем пулма пултараççĕ, тесе шикленет корреспондент.

АФИНЫ СЫВАХЕНЧИ КОНЦЕНТРАЦИЛЛЕ ЛАГЕРЬТЕ АПАТ ÇИМЕ ПĂРАХНИ

АФИНЫ, февралĕн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Афины хули сывăхĕнче Хасанри концентрацилле лагере хупнă сынсем, пуринчен ытла ЭАМ майлă сынсем, правительствăна ЭАМ тунă килĕшӳ условийĕсене пурнăçа кĕртсе пыманнине хирĕç протестлесе, апат çиме пăрахнă. Çав килĕшӳ тăрăх, политика ĕçĕсемпĕн хупнă сынсене амнести памалла пулнă. Апат çиме пăрахнисем хушшинче юлашки çапăçусенче тытăнса лекнĕ 350 партизан пур. Вĕсем ĕнтĕ 5 кун хушши нимĕн те çимеççĕ.

ЭАМ хаçачĕсем союзниксен посолĕсем ячĕпе тата пĕтĕм демократиллĕ тĕнче ячĕпе çырнă ӳçĕрăва пичетлесе каларнă. Вăл çырура çапла каланă: Греци власĕсем килĕшĕпе пăсаççĕ тата «союзниксен вăрçи пыракан фашистла ĕçсем» туса пыраççĕ. ЭАМ майлисене халь те йышăнăр арестлеççĕ-хи. Сăмахран, «Асирматос» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, юлашки кунсенче хĕçпăшăллă выступление хутшăннăшăн 55 çынна арестленĕ. Арестленисем хушшинче — 5 хĕрарăм.

Румынири лару-тăру

«АРЛЮС» ДЕЛЕГАЦИЙĔ ПРОТЕСТЛЕНИ

БУХАРЕСТ, февралĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Тимпул» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи сыхăнăва сирĕплетес тĕлĕшпе ĕçлекен Румыни обществин делегацийĕ («Арлюс») февралĕн 16-мĕшĕнче премьер-министр Радеску патне пынă та «кӳршери аслă союзниклпе пирĕн хушăри лайăх сыхăнусене сиенлеме пултаракан фашистла манифестацисем» тунине хирĕç протест панă. Делегацире çакăн пулнă: Пархон академик, Рашкану генерал, Садовяну, Енеску тата ытти-сем те. Çавăн пек манифестацисемшĕн ответлă пулса тăракан çынсене хирĕç правительство халех тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла, тенĕ вĕсем.

АМЕРИКА ПИЧЕЧЕ АРМИ ГЕНЕРАЛĔ ЧЕРНЯХОВСКИЙ ВИЛНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Çапăçу хирĕнче йывăр аманнă хыçăн армин генералĕ И. Д. Черняховский вилни çинчен пĕлтернине хăçатсенче курăнмалли вырăнсенче пичетлесе каларнă Çавăн пекех хăçатсем Черняховскин портречĕсене пичетлесе каларнă.

Польша Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин тата Польше республикин Вăхăтлăх Правительствин Премьер-Министрĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Эд. Осубка-Моравский господин Мускавран тухса кайни

Февралĕн 21-мĕшĕнче Польша республикин Халăх Совечĕн Президенчĕ Б. Берут господин тата Польша республикин Вăхăтлăх Правительствин Премьер-Министрĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Эд. Осубка-Моравский господин Мускавран тухса кайнă.

Центральнăй аэродромра Б. Берутпа Осубка-Моравский господинсене çаксем йăсатса янă: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделĕн 4-мĕш Европа Отделĕн Заведующийĕ В. А. Зорин, СССР Наркоминделĕн Протокол Отделĕн Заведующийĕ Ф. Ф. Молочков, Оборона Наркоматĕн Тулашри çыхăну Отделĕн Начальникĕ М. П. Кутузов генерал-майор, Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посол О. С. Модзелевский тата вăл ертсе пыракан Польша посольствин дипломатиллĕ составĕ.

Б. Берут тата Эд. Осубка-Моравский господинсемпе пĕрле Мускавран Союзĕн Польшăри Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ В. З. Лебедев тухса кайнă.

Çав кунах Мускавран Польша çарĕн главнокомандующийĕ М. Роля-Жимерский генерал-полковник тухса кайнă.

ПОЛЬША ХАÇАЧĔ ВАРШАВАНА ЮСАМА СОВЕТ СОЮЗĔ ПУЛАШНИ ÇИНЧЕН

ВАРШАВА, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Варшавăра Польша столицине Варшавăна юсама пулăшасси çинчен СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăнă постановлени пирки «Варшава пурнăçĕ» хаçатăн ятарласа хатĕрленĕ номерĕ тухнă. Хаçатра СССР Совнаркомĕн постановленине тата хулари Халăх Совечĕн чаплă ларăвĕ йышăннă резолюцине пичетленĕ. Вăл резолюцире столицăна юсама Польша халăхне пулăшнăшăн Совет Союзĕн халăхĕсене пĕтĕм чун-чĕререн тав тунине палăртнă.

Çак ĕç пирки хаçатăн умтатынче çапла çырнă: «Польша халăхĕ хăйне панă пулăшăва пиххăн та манас çук, совет халăхне вăл çакăн пирки пĕтĕм чун-чĕререн тав тунине тата унпа туслăн пурăннине ответлĕ».

ПРОФСОЮЗСЕН ПĔТЕМ ТЕНЧЕРИ ОРГАНИЗАЦИЙĔН ОРГАНИЗАЦИЛЛЕ КОМИТЕТĔНЧЕ

ЛОНДОН, февралĕн 22-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, пĕтĕм тĕнчери профсоюзсен конференцийĕ суйласа лартнă организацилле комитетăн ларăвĕ пулса иртнĕ. Çав ларура конференцин решенийĕсене пурнăçа кĕртмелли мерăсем çинчен сӳтсе-явнă. Конференци йышăннă план тăрăх, администрацилле комитет тунă.